С(Чув)
П 29
11437.чув.



Тихăн Петĕркки

# Ҫил-тăвăл

К С(чув)
П 29
11437.чув.



Тихӑн Петӗркки

# Сил-тавӑл


10h
9h
8h


7h
+50°
+40



К С(Чув)
П29



Тихӑн Петӗркки

Наукӑллӑ-фантастикӑллӑ повеҫ

# СИЛ-ТӐВӐЛ



## СЕНСАЦИ

Тӗнчере анӑш-тӑнӑш пӑлхану пуҫланса кайрӗ. Термоядерлӑ вӑрҫӑ хатӗрӗсене пӗтернӗ хыҫҫӑн та халӑх каплах хумханманччӗ... Чӑн та, сӑлтавӗ те пур иккен...

ЮПИ агенстви акӑ мӗн пӗлтернӗ:

«Совет Союзӗнче Ҫурҫӗрти пӑрлӑ океан пӑрӗсене ирӗлтереҫҫӗ. Пӑрлӑх айӗнче ылтӑн тӑвӗсем тупнӑ...»

Ҫавӑнтах тата хаҫат ҫапла ҫырса хунӑ:

«Тинӗс хӗрринче пурӑнакан ҫынсем, пурте тусем ҫине тарӑр! Пӑрлӑхсене ирӗлтерсен, тинӗссенчи, океан-



— Ăнланмастăп!

— Совет Союзне пăрлăха ирĕлтерекен станцие курма каятăн эсĕ,— терĕ хуçи, тарăхма тытăннине аранаран пытарса.

— Ман шухăшпа, ученăйсене пăр айĕнчен тухакан Утрава курма ярас вырăнне унта ракетăсем ямалла. Тивĕçлĕ. Материксене шыв айне тăвасшăн. Пыр та кур!—Сарлака çăварлин те çилленме тытăнни палăрчĕ.

— Ан лĕпĕртет!— йĕрĕнсе каларĕ хуçа.— Пăрлăхсене никам та ирĕлтерсе пĕтерме шухăшламасть Совет Союзĕнче.



— Радиопа телевидени тата хаçатсем пĕлтереççĕçке.

— Политикă,— каласа пĕтерме памарĕ ăна хуçи.— Тепĕр хут калатăп, халăх çиллине тапратма, коммунистсене курайми тума шавлаççĕ. Тата пирĕн прессă шавлани Совет Союзне пирĕн ученăйсене Утраври пăрлăха ирĕлтерекен станцине кăтартма килĕштерчĕ. Ку пысăк çĕнтерӳ!

— Апла пулсан, вĕсен ĕçĕ çĕмрĕк çăмарта хуппи тĕшне те тăрас çук. Мĕн кайса пăхмалли унта!

— Э-э, йăнăшатăн, мистер. Кайса курмаллах. Çиел-



ли тата — сирӗн ывӑлӑрпа паллашрӑмӑр. Хисеплӗ ҫамрӑк ученӑй.

— Ҫумӑр ӳккелени курӑнмарӗ-ха,— терӗ Светлов.

— Ҫумӑр ҫумасть-и?— чӑнах та тӗлӗннӗ пек пулчӗ американец.— Апла питӗ лайӑх, питӗ лайӑх! Кунта хӗвел ахаль те курӑнмасть...

— Пулӗ-ха хӗвел, курӑнӗ, епле кӑна пулӗ!—терӗ те Светлов, американеца ларма сӗнчӗ. Вадима шыв хӗррине хумсене сӑнама кайма хушрӗ.

Хире-хирӗҫ ларнӑ ҫынсем малтан пӗр-пӗрин ҫине сӑнаса пӑхса илчӗҫ, унтан сӑмах хӑнасем епле вырнаҫни ҫинчен пычӗ, каярахпа ҫанталӑк ҫине, сывлӑх ҫине куҫрӗ.



Марина ӳкерчӗксене пысӑклатрӗ те ҫынсене паллания: Чолонпа Вадим. Светловпа ҫыхӑну татӑлни ҫавӑнти пӗр-пӗр прибор ӗҫрен тухнинчен килни палӑрчӗ. Айӑпли лешӗ мар-ши? Ӑнсӑртран-ши е... Юри тунӑ пулсан вара? Мӗн пулма пултарать-ха капла? Светлов ҫыхӑнусӑр пӗтме пултарать вӗт. Ҫавна пӗтерес тесе, ятарласа туман-ши ҫак япалана? Ытлашши шанать-ҫке Вадим ют ҫынна!

Марина пӗр кнопкӑ ҫине пусрӗ те мачтӑ тӑрринчи ҫынсем ҫӳлти пӳлӗме хупӑнса ларчӗҫ.

Ҫав вӑхӑтра ҫамрӑк хӗр тепӗр ҫыхӑну йӗрне ӗҫе ячӗ



(çакна уйрăм çынсем анчах пĕлеççĕ). Экран çине Светлов катерĕ сиксе тухрĕ.

— Сергей Петрович! Ан шикленĕр! Çыхăну вăхăт-лăха çеç татăлчĕ!

Светлов, ыррăн пăхса, йăл кулчĕ, хĕр ĕçне ырларĕ: хăйне шаннă пек шанать вăл ăна.

* * *

Аппаратнăя Вадим кĕчĕ. Марина ун еннелле куç хӳрипе пăхса илчĕ те каллех ĕçе пикенчĕ. Юлташĕпе



МГУ пысăк залĕнче дискусси пуçланчĕ. Уçаканĕ— академик. Президиум сĕтелĕ хушшинче ученăйсем, космонавтсем, инженерсем. Залра пĕр пушă вырăн çук. Шăп. Шурала пуçланă çӳçлĕ академик сăмах пуçларĕ.

— Хаклă юлташсем!— терĕ вăл, залра ларакан çынсем çине пăхса илсе.— Нумаях пулмасть, эпир ас тăвассах, Совет Союзĕ космос ĕмĕрне пуçласа ячĕ.— Академик пирвайхи спутникрен тытăнса Уйăхпа Çĕр хушшинче çӳрекен ракетăсем таранах асăнчĕ, унтан çапла каларĕ: — Çынсем Марс çине çитессине, каялла таврăнассине пурте ĕненеççĕ, наукăпа техникă юлашки вăхăтра тĕлĕнмелле çитĕнӳсем турĕç. Пĕр ыйту: мĕн




километрта çеç. Ун çинчен планетă ывăç тупанĕ çинчи пек курăнмалла. Ку вариантăн тата тепĕр лайăх енĕ пур. Марс талăкĕ 24 сехет те 37 минут тăсăлать. Талăк хушшинче Фобос планетă йĕри-тавра темиçе хут çаврăнма ĕлкĕрет, çавăнпа ун çинчен Марса пур енчен те пăхма меллĕ.

Иккĕмĕш вариант çиеле тухрĕ. Карап, Фобос çине автоматстанци пăрахса, хăй Марс хирне ларать, пĕрер уйăх ют тĕнчепе паллашать.

Валентин Владимирович аллинчи сехечĕ çине пăхрĕ. Иккĕмĕш специальноçĕ унăн — врач ĕçĕ, çавăнпа вăл кунта — çынсене режима пăхăнтараканни.



рĕç. Çак васанри шăтăкран тата виçĕ чĕрчун тухрĕ. Иккĕшĕ çын евĕрлĕрех, виççĕмĕшĕ слон пысăкăш нăрă. Çын евĕрлисем Вадима çĕклерĕç те нăрă çине лартрĕç. Нăрă шăмă çуначĕсене сарчĕ, çемçе çуначĕсемпе сăрăлтаттарса çĕкленчĕ те Вадима таçта илсе кайрĕ.

## КАН-КАН-КАН

Карапра тревогă. Вадима пулăшма Андриановпа Валентин Владимирович тухрĕç. Васана чи малтан Андрианов чупса çитрĕ. Вĕçекен аппарат çĕклениччен ĕлкĕреймерĕ вăл, бинокльпе çеç хыçалтан пăхса юлчĕ.



Анчах пĕлеймерĕ: чăн-чăн аппарат-ши е вĕçен кайăк-ши?

— Вĕçен кайăк мар!— терĕ пырса çитнĕ Валентин Владимирович.— Вĕçен кайăк япалана е сăмсипе çĕклет, е чĕрнисемпе ярса тытать. Кунтан вĕссе хăпарнин çăварĕнче те, чĕрнинче те ним те курăнмарĕ.

Андриановпа Валентин Владимирович шăтăка кĕрсе пăхрĕç: Вадим çавăнта выртмасть-ши? Шăтăкĕ тасçта шалалла илсе кĕрет. Хăвăлтан ăшă сывлăш палкаса тухать. Шăтăк стенисене хытă япаларан тунă: те метал вăл, те минерал.



Хулăнни тĕлĕнсе пăхрĕ, унтан шавлама тытăнчĕ. Марсиансене пăхсан, тавлашу мĕн пирки пуçланни паллă: хĕр Вадима ярасшăн мар, хулăнни хăйпе пĕрле илсе каясшăн. Хĕр çĕнтерчĕ. Хулăнни наçилкке çине ларчĕ, илсе кайма васкатрĕ. Сиктерекен наçилкке çинче темиçе хут çаврăна-çаврăна темскер каларĕ вăл хĕре, юнарĕ. Элиме ахăлтатса кулса ячĕ.

Вадим халĕ пӳлĕмрен тухса тарма пултарать. Хăйне салтса янă марсиансемпе хĕр тытса чарас çук ăна, хăш еннелле каймаллине те туйса илчĕ, анчах кунта мирлĕ пулмалла. Çынсем ку планетă çине тăшманла килмен. Юлташĕсем кунта хăвармĕç ăна, çăлĕç, çавăн пек вăл



Юрӑхсӑр ҫын мар-ҫке. Тӗрӗс, ҫитменлӗхсем пур ӗнтӗ унӑн, анчах юлашки вӑхӑтра вӑл вӗсене пӗтерме тӑрӑшатчӗ, наукӑ тӗлӗшпе те пӗтӗм вӑйне хурса ӗҫлетчӗ. Ахаль мар ӗнтӗ Марс ҫине геолог вырӑнне ячӗҫ. Халӗ урӑхла калаҫӗччӗ Марина Вадимпа, тупасчӗ кӑна, таврасчӗ ӑна.

Андрианов каланӑ тӑрӑх, Вадим экспедицишӗн пысӑк ӗҫ тунине хӑй те пӗлмест. Марсиансем ӑслӑ чӗрчунсем. Ҫынна юриех хӑйсем патӗнчен ямаҫҫӗ, салукра тытаҫҫӗ: ан тив, ыттисем чипер пурӑнччӑр. Ҫынсене шансах кайманни паллӑ. Тӗрӗс тӑваҫҫӗ. Вӗсем чӗнмесӗр



сене пулăшма кайрĕç. Йывăрлăхра çынсене пăрахмалла мар.

Çанталăк аван тăрать. Кăнтăр енчен вăйлă мар çил вĕрет. Унта-кунта шурă пĕлĕт чăмаккисем шăваççĕ.

Аялта вăрмансем, хирсем, татах вăрмансемпе хирсем. Астрономсем ят панă «тинĕссем» вĕсем. Сайра хутра хуласем курăнкалаççĕ. Çакă вăл планетă халăхĕ ытла йышлах маррине кăтартать.

Сывлăшра нăрăсем хирĕç пулкалаççĕ. Аялта тӳрем çулсемпе калтасем çӳреççĕ, вĕсемпе марсиансем темскер турттараççĕ. Марсиансене питĕ шултăра чĕрчунсем пăхăнаççĕ. Те вĕсем те ăслă чĕрчунсем, Çĕр çинчи ти-



нĕссенчи дельфинсем пеккисем? Çĕр çыннисем малтан вĕсене аппаратсем тесе шутланăччĕ.

Çапла, хăйсемле пурăнаççĕ, хăйсемле ĕçлеççĕ марсиансем. Ют планетă çыннисем килни вырăнлă-ши?

Аякра, симĕс вăрмантан инçе мар, хăмăр тавралăхра карап ларни курăнчĕ. Машинă çавăнта анас умĕн ун патĕнчен нăрăсем вĕçсе хăпарчĕç те вăрман еннелле кайрĕç.

Светловпа Валентин Владимирович люксене ярах уçса пăрахнă карап ăшне кĕчĕç. Унта пĕр çын та çук. Шултăра хурт-кăпшанкăсем çеç хуçаланса кĕшĕлтетеççĕ тата çынсем ĕçе янă аппаратсем хăйсем сĕрĕлтетеççĕ.



Валентин Владимирович ӳкерсе илме пуçларĕ. Тĕлĕнмелле кинокадрсем тухма пултараççĕ. Ĕненĕç-ши Çĕр çинче? Авал Австралирен утконос кĕлеткине Европăна илсе килсен, никам та ĕненмен, шарлатансем улталаççĕ, тенĕ вĕреннĕ çынсем. Çавăн пек пулмĕ-ши Çĕр çине çак кадрсене илсе çитерсен?

Планетă çинче япалан йывăрăшĕ сахаллипе çунатлă удавсем çăмăллăнах вĕçсе çӳреççĕ. Халĕ вĕсем тĕрлĕ тĕле сапаланчĕç, тем шыраççĕ. Пĕри карап йĕри-тавра темиçе хут явкаланчĕ, иллюминатор витĕр те çăварне карса анасларĕ, унтан, çынсем патне кĕме çуккине кура, хӳри вĕçĕпе çапрĕ те çӳлелле вĕçсе хăпарчĕ.



— Ай, карланкă! Куртăр-и шăлĕсене?— ахлатрĕ Валентин Владимирович.— Пурсăмăра çăтма та вăйĕ çитĕ!

Çав вăхăтра шăхăрни илтĕнчĕ. Çӳле вĕçсе хăпарнă çĕлен аялалла вăркăнса анчĕ те карап çумĕнче ларакан куполлă çурта пĕр енчен кĕрсе тепĕр енне çиçĕм пек шăтарса тухрĕ.

— Çĕлен хирĕнчен килнисем!— терĕ лăпчăнса ларнă Элиме. Питне тата хытăрах сенкер сĕм çапрĕ, хĕрлĕ тутисем шупкаланчĕç.— Пĕтереççĕ вĕсем! Мана шыраççĕ! Юриех тапратса янă вĕсене!

— Камсем? — ыйтрĕ Светлов.



ăшĕнче карапа сырса илнĕ марсиансем те вут çывă-хĕнче тăнă пекех.

Шухăшлаттаракан тавралăх. Мĕн каламалла пу-хăннă марсиансене, епле лăплантармалла?

Светлов Çĕр çинче çынсем икĕ тĕрлĕ патшалăхсенче пурăнни çинчен каласа ăнлантарчĕ. Пĕрисем, Светлова çак планетă çине янисем, марсиансемпе туслă пурă-насшăн, пĕр-пĕрин ирĕкне хĕсĕрлесшĕн мар. Теприсем урăхларах шухăшлаççĕ, анчах вĕсене ытлашши ирĕк памĕç. Сергей Петрович, марсиансем кунта çитнĕ Америкă ученăйĕсем çине тăшмакла ан пăхчăр тесе, çак вырăна уйрăмах çемçетрĕ.




Марс çине килсе курни, ун пурнăçне пĕлни — Çĕр çинчи наукăсемшĕн питĕ хаклă. Марсиансемшĕн те çынсемпе паллашни питĕ усăллă пулĕ. Кунта ăшăрах климат туса яма май пур. Çĕр çинчен илсе килнĕ термоядерлă вăйпа (авал унпа çак планетă çинче те усă курни паллă) пĕтĕмпе металсенчен тунă «Çывăххине» (Фобоса) каялла антарĕç, планетă ăшне тарăнтарах кĕрсе, ун ăшă паракан энергине тата унта выртакан металсене кăларма меслетсем тупĕç.

Нумайччен калаçрĕ Светлов, хĕрÿллĕн ÿкĕтлерĕ. Вăл хăйсем ларакан вырăнта купол ăшĕнче пĕчĕкçеç тĕнче туни çинчен пĕлтерчĕ,— унта сивĕ хĕл вăхăтĕн-


10h
9h
38


7h
50°